26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943
ДЕКАБРЬ
31
ЭРНЕКУН
258(6495) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ВАТУТИНА

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, Житомир еннелле наступлени пуçласа ярса, нимĕçсен оборонине татнă та ултă кун хушши вăйлăн çапăçнă хыççăн, декабрĕн 29-мĕшĕ тĕлне, 50 километртан пуçласа 100 километр таран малалла куçнă, татса кĕнĕ вырăна фронт тăрăх 300 километр таран сарнă.

Наступлени туса пырса, пирĕн çарсем нимĕçсен сакăр танковăй дивизине, çав шутра СС «Адольф Гитлер» тата «Райх» ятлă танковăй дивизийĕсене, тата вунтăватă пехотнăй дивизине аркатса тăкнă.

Ăнăçлăн наступлени туса пырса, пирĕн çарсем КОРОСТЕНЬ хулипе пысăк чугун çул узелпе, ВОЛОДАРСК-ВОЛЫНСКИЙ, ЧЕРВОНОАРМЕЙСК, ЧЕРНЯХОВ, РАДОМЫШЛЬ, КОРОСТЫШЕВ хулисене, КАЗАТИН хулипе питĕ кирлĕ чугун çул узелне, СКВИРА хулине тата халăх пурăнакан ытти пин пункта ытла тытса илнĕ.

Çапăçусенче çаксем чапа тухнă: МОСКАЛЕНКО генерал-полковникăн, ЧЕРНЯХОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ПУХОВ генерал-лейтенантăн, ГРЕЧКО генерал-полковникăн, ЖМАЧЕНКО генерал-лейтенантăн, ЛЕСЕЛИДЗЕ генерал-полковникăн, АФОНИН генерал-майорăн, ЛЮДНИКОВ генерал-лейтенантăн, КИРЮХИН генерал-майорăн çарĕсем, РЫБАЛКО генерал-лейтенантăн, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КАТУКОВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КРАВЧЕНКĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПОЛУБОЯРОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ПАНФИЛОВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ГЕТМАНĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ИВАНОВĂН танкисчĕсем тата артиллери генерал-лейтенанчĕн ТУРБИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ИВАНОВĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн КОРИАШВИЛИН, артиллери генерал-майорĕн ФРОЛОВĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЬКОВĂН, ГУСЕВ полковникăн тата МИНТЮКОВ полковникăн артиллерисчĕсем.

Тунă çĕнтерĕве палăртса хăварас тесе, çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чаçсене, çавăн пекех тата чапа тухнă командирсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, декабрĕн 30-мĕшĕнче, 22 сехетре, пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ Украинăри 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, нимĕçсен оборонине татнăскерсене, икçĕр çирĕм тăвату тупăпа çирĕм хут хăрăс персе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, КОРОСТЕНЬ, ЖИТОМИР тата КАЗАТИН патĕнчи çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕ.

Совет Союзĕн Маршалне И. В. Сталина 1-мĕш СТЕПЕНЬ СУВОРОВ орденне пани

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ ĕнер, декабрĕн 30-мĕшĕнче, Совет Союзĕн Маршалне И. В. Сталина 1-мĕш СТЕПЕНЬ СУВОРОВ орденĕ панă, ăна нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçăра Хĕрлĕ Çарăн операцийĕсене тĕрĕс ертсе пынăшăн тата тунă çитĕнӳсемшĕн наградăланă. (ТАСС).

СССР Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Совет Союзĕн Государство гимнĕн музыкине çирĕплетнĕ, çав музыкăна массăллăн юрлама, хорсем, симфонически оркестрсем тата духовой оркестрсем валли çырнă.

1944 çулхи январĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Совет Союзĕн Государство гимнне радиопа парассĕ.

Совет Союзĕн Государство гимнĕн нотисене 1944 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче пичетлесе кăларассĕ.

Шкул ачисен канăвĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, телефонпа. ВЛКСМ райкомĕ каникул ирттерме ĕç планĕ турĕ. Декабрĕн 31-мĕшĕпе январĕн 2-мĕшĕ хушшинче шкулсенче çĕнĕ çул елкисем пулассĕ. Ытти кунсенче йĕлтĕрлĕ походсемпе ăмăртусем тата тĕрлĕрен вăйăсем ирттерессĕ.

Н. СКВОРЦОВ.

Чăваш АССР Наркомземĕпе ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕ тăратнă тăрăх, тракторсене юсамалли IV-мĕш кварталти плана ăнăçлăн тата срокчен ытлашшипех пурнăçа кĕртнĕшĕн çак МТС-сене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

1. Йĕпреç МТС-ĕ (директорĕ Г. И. Иванов юлташ, парторганизаци секретарĕ П. Н. Мамонтов юлташ, старши механик П. Н. Михайлов юлташ). МТС тракторсене капитальнăй ремонт тумалли плана 112,5 процент, текущи ремонт тумалли плана 211,1 процент тултарнă.
2. Вăрнар МТС-ĕ (директорĕ Ф. С. Никонов юлташ, парторганизаци секретарĕ Г. И. Мишаков юлташ, старши механик В. Ф. Ремизов юлташ). МТС тракторсене капитальнăй ремонт тумалли плана 140,8 процент текущи ремонт тумалли плана — 155,5 процент тултарнă.
3. Красноармейски МТС-ĕ (директорĕ А. К. Константинов юлташ, парторганизаци секретарĕ Е. Г. Григорьев юлташ, старши механик Б. И. Виноградов юлташ). МТС тракторсене капитальнăй ремонт тумалли плана 160 процент, текущи ремонт тумалли плана 145 процент тултарнă.
4. Шупашкар МТС-ĕ (директорĕ П. И. Смирнов юлташ, парторганизаци секретарĕ В. Е. Ефимов юлташ, старши механик И. С. Семенов юлташ). МТС тракторсене капитальнăй ремонт тумалли плана — 125 процент, текущи ремонт тумалли плана—162,5 процент тултарнă.
5. Комсомольски МТС-ĕ (директорĕ В. А. Алексеев юлташ, парторганизаци секретарĕ Б. Б. Ассйнов юлташ, старши механик П. А. Кудрявцев юлташ). МТС капитальнăй ремонт планне 200 процент, текущи ремонт планне 100 процент тултарнă.
6. Канаш МТС-ĕ (директорĕ И. А. Зайцев юлташ, парторганизаци секретарĕ Н. П. Павлов юлташ, старши механик А. А. Афанасьев юлташ). МТС капитальнăй ремонт планне 157 процент, текущи ремонт планне 100 процент тултарнă.
7. Елчĕк МТС-ĕ (директорĕ П. А. Яшин юлташ, парторганизаци секретарĕ В. П. Павлов юлташ, вăлах старши механик)

Чаплă çĕнтерӳсен çулталăкĕ

Пин те тăхăрçĕр хĕрĕх тăваттăмĕш çула совет халăхĕ фронтра та, тылра та чаплă çĕнтерӳсем туса кĕтсе илчĕ. 1943 çулта нимĕç захватчикĕсене социализмлă Тăван çĕршывран массăллăн хăваласа кăларас ĕç пуçланчĕ. Сталинград патĕнчи историллĕ çапăçусем ăнăçлăн вĕçленни, паттăр Хĕрлĕ Çар Дон, Çурçĕр Донец, Миус, Молочная, Десна тата Сож, Днепр, Припять шывĕсем урлă ăнăçлăн каçни, Донбасса нимĕç захватчикĕсенчен туртса илсе Тăван çĕршыва тавăрса пани тата ытти питех те чаплă çĕнтерӳсем — геройла саманан летописĕ çине ылттăн саспаллисемпе çырăнса юлчĕç.

Пирĕн çарсем вăйлăн пыра-пыра çапнине пула, нимĕçсен фашистла çарĕсем хăйсем тытса илнĕ совет çĕрĕн ⅔ пайне васкавлăн пăрахса тарчĕç, çапăçу хирĕнче питех те нумай техника, хĕçпăшалсемпе боеприпассен склачĕсене пăрахса хăварчĕç, темиçе миллион салтакпа офицерне çухатрĕç.

Хĕрлĕ Çар кăçалхи çулăн иккĕмĕш çурринче иртнĕ хĕллехи кампанин ăнăçăвĕсене малалла ӳстерсе пычĕ, çапăçури пуçарулăха хăй аллинче çирĕп тытрĕ. Çуллахи вăхăтра Хĕрлĕ Çар ăнăçлăн наступлени тума пултараймасть текен нимĕç фашисчĕсем шухăшласа кăларнă халлапсем татăклăнах путланса ларчĕç. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар кăçал, ăнăçлăн наступлени туса пырса, пĕр миллион тăваткăл километр ытла территорие ирĕке кăларчĕ.

1943 çул çакăнпа пĕрлех гитлерла Германие тата унпа пĕр каварлă çĕршывсене вăрçă вăрçас тĕлĕшпе те, политика енĕпе те тарăн кризиса кĕртсе ӳкернĕ çулталăк пулса тăчĕ. Иртнĕ çулталăкра Совет Союзĕпе Великобритани тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинчи туслăх татах та вăйланса тĕреклĕнчĕ, фашистла блокăн пĕтĕм çурчĕ кисренчĕ, ишĕлме тытăнчĕ.

Пирĕн союзниксен çарĕсем, çавăн пекех Югослави партизанĕсен боевой отрячĕсем те, 1943 çулта нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешсе, вăрçă ĕçĕнче паллă çитĕнӳсем турĕç. Гитлерла Германи Çурçĕр Африкăра та, Тунисра та поражени тӳсрĕ, Вăтаçĕр тинĕсе çухатрĕ.

Союзлă виçĕ держава хушшинчи туслăхпа çыхăну тĕреклĕнсе пынине Мускавра тата Тегеранра пулса иртнĕ историллĕ конференцисем уççăн çирĕплетсе пачĕç.

Çапла, Хĕрлĕ Çарпа совет халăхе нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре иртнĕ çулталăк хушшинче питех те чаплă çитĕнӳсем турĕç. Вăрçă халĕ ĕнтĕ татăклăн вĕçленесси патнелле пырать.

Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсене аларан вĕçертес мар тесе, тăшмана хăвăртрах çапса аркатас тесе, совет тылĕ 1943 çулта вăя шеллемесĕр ĕçлерĕ. Совет халăхĕ вăрçăн йывăр условийĕсенче хăйĕн геройла Çарне мĕн кирлине йăлтах парса тăма пултарчĕ. «Çирĕппĕнех çапла калама пулать: совет çыннисем тылра вăя шеллемесĕр ĕçлени Хĕрлĕ Çарăн паттăр çĕнтерĕвĕпе пĕрлех, Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ çĕрте халăх нихăçан пулман паттăр ĕç тунине кăтартса, историе кĕрсе юлать» (СТАЛИН).

Тăван халăхăн 1943 çулхи пархатарлă ĕçĕ те çавăн пекех историе кĕрсе юлĕ. Орденлă Чăваш республикинчи нумай колхозсем кăçал гектартан вăтам шутпа çĕршер пăт тĕштырă туса илчĕç. Республика Октябрьти социализмлă Аслă революци 26 çул тултарнă тĕле государствăна 1943 çулшăн тырă парса татрĕ, Хĕрлĕ Çар фондне тата çитес çулхи натуроплатăшăн 105.000 пăт тырă аванс шучĕпе парса хучĕ.

Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне хамăр аларах хăварассишĕн вăйлăн кĕрешсе, пирĕн колхозсем государство выльăхчĕрлĕх ĕрчетме панă çулталăкри плана срокчен нумай малтан пурнăçа кĕртрĕç. Республикăри колхозсем государствăна аш-какай памалли плана сентябрь уйăхĕнчех тултарчĕç, декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне иртнĕ çул çав вăхăт тĕлне аш-какай панинчен 212 пин пăт ытларах аш-какай парса хучĕç.

Республикăри промышленность предприятийĕсем те мухтава тивĕçлĕ ĕçлерĕç. Республикăн чи пысăк предприятийĕсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура уйăхсерен малти вырăнта тухса пычĕç. Столицăри промышленность 11 уйăхра тавар кăлармалли плана 107,1 процент тултарчĕ. Уйрăмах Якунинпа Челноков юлташсем главнăй инженерсем пулса ĕçлекен заводсем пысăк çитĕнӳсем турĕç.

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод, çулталăкри программăна декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарнăскер, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне 7 уйăх хушши хăйĕн аллинче тытса тăрать ĕнтĕ. Çак çитĕнӳ вăл пĕтĕм коллектив тăрăшса, вăя шеллемесĕр ĕçленипе пулчĕ. Çак çитĕнӳ вăл паллă стахановец-коммунист Н. Офицеров тата ун пек темиçе çĕр рабочи тӳрĕ кăмăлпа ĕçленипе пулчĕ. Большевикла партин членĕ стахановец Н. Офицеров кăçалхи 10 уйăх хушшинче тăвата çулхи задание пурнăçа кĕртнĕ.

Тăван халăхăн фронтри темиçе пин ывăлĕ-хĕрĕсем тискер тăшмана хирĕç хăйсен пурнăçĕсене хĕрхенмесĕр паттăррăн кĕрешеççĕ. Пирĕн 4.500 ытла земляка ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене панă. Вăрçă кунĕсенче чăваш халăхĕн 9 ывăлĕ—Федот Орлов, Борис Васильев, Мирон Ефимов, Павел Лаптев, Геннадий Габайдулин, Семен Коновалов, Александр Сидорин, Иван Поляков, Филипп Ахаев — Совет Союзĕн Геройĕсем пулса тăчĕç. Тăван халăх Хĕрлĕ Çара тата фронтри хăйĕн ывăлĕсене пулăшса тăрас ĕçшĕн нимĕн те шеллесе тămасть.

Хĕрлĕ Çар валли çар техники тумашкăн республикăри ĕççыннисем 82 миллион тенкĕ укçа, 120.000 пăт ытла тырă пухрĕç. Çакă патриотла пархатарлă ĕçсемшĕн аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ республикăри ĕççыннисене икĕ хутчен саламларĕ, Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав турĕ. Кунсăр пуçне республикăри колхозсемпе колхозниксем государствăна 2,5 миллион пăт тырă тата çĕрулми сутрĕç. Советăн çуламлă патриочĕсем— Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕ коммунист Абдул Гаязович Гаязов Хĕрлĕ Çар валли çар техники туянма 105 пин тенкĕ укçа, 36 пăт тырă пачĕ, Военнăй Заем облигацийĕсене 15.000 тенкĕлĕх, укçапа япаласен лотерейин билечĕсене 10.000 тенкĕлĕх туянчĕ. Кунсăр пуçне вăл государствăна татах 166 пăт тырă сутрĕ.

Тăван халăх 1943 çулта Хĕрлĕ Çар валли çар техники туянма 100.000-шер тенкĕ панă Дубровин, Васянин, Пугачев патриотсен ячĕсене, государствăна 100-шер пăт е ытларах та тырă сутнă А. Г. Гаязов, Е. А. Арсентьева, В. В. Зайцев, И. П. Краснов, П. М. Маркиянов тата ытти патриотсен ячĕсене паян, 1944 çула кĕрес умĕн, тепĕр хут ырă кăмăлпа аса илет. Вĕсен пархатарлă ĕçĕ ĕмĕрне те манăçа тухмĕ, вăл республикăри ĕççыннисене фронта вăйлăнрах пулăшма малалла мобилизацилесе пырĕ.

Пирĕн республика ытти тăванла республикăсем хушшинче хисеплĕ вырăн йышăнса тăрать. Республика аллинче халь Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕ ялкăшать. Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пынăшăн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри ӳсĕмсемшĕн пирĕн республикăна кăçал каллех Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне пама кандидата тăратнă. Çакă вăл республикăри ĕççыннисене вĕçĕмсĕр савăнтарать, çав вăхăтрах фронта пулăшас ĕçе малашне те ырми-канми туса пыма хушать.

Çĕнĕ, Пин те тăхăрçĕр хĕрĕх тăваттăмĕш çула кĕрес умĕн совет халăхĕ тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех çĕнтерес сехет çывăххине çирĕппĕн шанса тăрать. Çавăнпа вăл хăйĕн пĕтĕм вăйне тăван Çара пулăшнă çĕре парать.

Юратнă çулпуçăмăр Сталин юлташ ертсе пынипе нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тĕппипех çапса аркатассишĕн 1944 çулта татах та чаплăрах çĕнтерӳсем тăвар!

Магнитогорск,

Магнитогорскри металлурги комбиначĕ—Дымшиц, Носов, Гуревич, Фокин, Осмер, Петруша юлташсене

Магнитогорскри строительсемпе металлургсене производствăра пысăк çĕнтерӳ тунипе хĕрӳллĕн саламлатăп тата тав тăватăп.

Магнитогорецсем вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче калама çук кĕске срокра чи пысăк домна кăмакине туса пĕтерсе ĕçе ячĕç.

Производство хăватне пĕр чарăнмасăр ӳстерсе пырас тата çар промышленноçне металл парса тăрас ĕçре магнитогорецсем хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçленине пирĕн Тăван çĕршывпа чаплă Хĕрлĕ Çар нихăçан та манмĕç.

Малашне те геройла, пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе, эсир нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тĕппипех аркатса тăкмашкăн металл туса кăларас ĕçе тата ытларах ӳстерессине эпĕ çирĕп шанса тăратăп.

Сире, Магнитогорскра ĕçлекен юлташсем, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума сунатăп.

И. СТАЛИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 28-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 28-мĕшĕнче ВИТЕБСК енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сире-сире ярса, малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ.

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, КОРОСТЫШЕВ хулине тата Житомир облаçĕнчи ПОТИЕВКА ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата 50 ял ытла йышăнса илнĕ, вĕсем хушшинче—БЕХИ, КОЗИНОВКА, ЗЛОБИЧИ, СТАРИКИ, ДОБРЫНЬ, БУДИЛОВКА, ВИХЛЯ, СТАРАЯ БУДА, ОБЛИТКИ, ЗАНЬКИ, ЛЯХОВАЯ, ЧАЙКОВКА, ФИЛИППОВИЧИ, КАЙТАНОВКА, БЕРЕЗОВКА, МИНЕЙКИ, ТЕСНОВКА, СМОЛОВКА, НЕХОРОШ, МОИСЕЕВКА, ПАВОЛОЧЬ ятлă пысăк ялсем.

КИРОВОГРАДРАН çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен шултра вăйĕсен атакисене сире-сире янă, тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тӳстернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 105 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 15 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Витебск енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, çаплах малалла куçса пынă, темиçе ял тытса илнĕ. Витебскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени боецĕсем нимĕçсенчен пĕр пысăк вăрмана тасатнă. Çавăн чухне гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Витебскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшман хăйĕн резервĕсене илсе пынă, унта унăн артиллерийĕпе танкĕсем хăйсен ĕçĕсене вăйлатнă. Меллĕ вырăн йышăнса тăнипе усă курса, нимĕçсем темиçе хут та контратака тунă. Пирĕн çарсем, хĕрӳллĕн çапăçса, меллĕ позицисем тытса илнĕ. Çав çапăçусенче нимĕçсен 1.000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

ДЕКАБРĔН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 29-мĕшĕнче ВИТЕБСК енче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ, вĕсем хушшинче—КОЗЛЫ, КОРОЛИ, ЗАБОРЦЫ, ЛОСВИДА, БОРОВНЯ, УГЛЯНЫ, КРАСНЫЙ ДВОР ятлă ялсем.

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, ăнăçлăн малалла наступлени туса пынă, КОРОСТЕНЬ хулипе чугун çул узелне, ЧЕРНЯХОВ хулипе чугун çул станцине, СКВИРА хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан 250 пункта ытла йышăнса илнĕ, çав шутра—ЧИГИРИ, КУПИЩЕ, БЕЛОШИЦЫ, КОВАЛИ, КРАПИВНЯ, НЕБИЖ, САЛЫ, СЕЛЕЦ, ЖАДЬКИ, БРАЖИНКА, ВЫДЫБОР, КОРБУЛЕВ, АНДРЕЕВ, БЕЖЕВ, СЛИПЧИЦЫ, ТОРЧИН, КАМЕННЫЙ БРОД, СТАРОСЕЛЬЦЫ, ГУМЕННИКИ, СТУДЕНИЦА, СТРИЖЕВКА, ЛЕВКОВ, ВОЛОСОВ, СТАРАЯ КОТЕЛЬНЯ, НОВАЯ КОТЕЛЬНЯ, КРАСОВКА, БЕЛОПОЛЬЕ, РАДЗИВИЛОВКА, ВЕРНИГОРОДОК, МАЛАЯ ЧЕРНЯВКА, МАЛЫЕ НИЖЕГУРЦЫ, КАРАБЧЕЕВ, ВЕРХОВНЯ, КРИВОШЕИНЦЫ, КРЫЛОВКА, СЕЛЕЗЁНВКА, КРАСНОЛЕСЫ, ВИНИЦКИЕ СТАВЫ ятлă пысăк ялсене тата КЛОЧКИ, УШОМИР, ВЫГОВ, ТУРЧИНКА, ФАСОВО, ГРАДА, КОРЧМА, ПАЛЕНИЧЕНЦЫ ятлă чугун çул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

КИРОВОГРАДРАН çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен шултра вăйĕсен атакисене ăнăçлăн сире-сире янă, тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тӳстернĕ.

ДНЕПР шывĕн кукринче, ЗАПОРОЖЬЕ хулинчен хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем наступлени пуçласа янă та халăх пурăнакан 30 пункта ытла çапăçса тытса илнĕ, çав шутра ЗАПОРОЖЬЕ хулин ДНЕПР шывĕн тепĕр енчи пайне, çавăн пекех тата ЗЕЛЕНЫЙ ГАЙ, ЛУКАШЕВКА, ВЕЛИКИЙ ЛУГ, ХОРТИЦА, КАНЦЕРОВКА, БАБУРКА, НИЖНЯЯ ХОРТИЦА, РАЗУМОВКА, НОВО-ФЕДОРОВКА ятлă пысăк ялсене тытса илнĕ, ХОРТИЦА утравне тăшмантан тасатнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 28-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 113 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 33 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, артиллери персе тăнă хыççăн, Коростень хули патне пымалли вырăнсене хӳтĕлесе тăнă тăшмана атакăланă. Нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе, совет боецĕсем хăвăрт малалла куçнă, вĕсем хулан çурçĕр тата кăнтăр енĕпе ирте-ирте кайнă. Фронтран тата флангсенчен татăклăн пыра-пыра çапса, тăшмана аркатса тăкнă та пирĕн çарсем Коростень хулине каллех нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă. Нимĕçсенчен йывăр тата çăмăл хĕçпăшалсем нумай тытса илнĕ, боеприпассемпе çар материалĕсен складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн çарсем, вирлĕн малалла куçса пырса, Черняхов хулипе чугун çул станцине штурмласа тытса илнĕ. Çав хула патĕнче нимĕçсен 26 танкне персе çĕмĕрнĕ, тăшманăн нумай автомашинине тата пысăк обозне пĕтерсе тăкнă е тытса илнĕ. Нимĕçсем хăйсен мĕнпур техникине, артиллерине тата боеприпасĕсене пăрахса тарнă. Малалла наступлени туса пырса, пирĕн çарсем Сквира хулине тата халăх пурăнакан 250 пункта ытла тытса илнĕ. Пĕр чугун çул станцийĕнче тăшманăн тиесе çеç пырса çитнĕ пилĕк вагонсенчен аннă. Пирĕн

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

танкистсемпе автоматчиксем станцие хăвăрт пырса кĕнĕ те, гитлеровецсем строя тăма та ĕлкĕреймен. Нимĕç салтакĕсен пĕр пайĕ тарса саланнă, ыттисене тыткăна илнĕ. Çапăçусенче тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен калама çук пысăк çухату тÿсет.

Çантăлăк начар тăнă пулин те, совет авиацийĕ, нимĕç çарĕсене пырăлыра çапса, 20 танк ытла, 200 автомашинă тата темисе поезд пĕтерсе тăкнă.

* *

Кировоградран çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен шултра вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Халăх пурăнакан пĕр пунктăн районĕнче уйрăмах хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Нимĕç пехоти, танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем пулăшса пынипе, пирĕн позицисене темиçе хут та атакăланă. Тăшман кăç пуличченех атакăланă. Нимĕçсем пысăк çухату тÿснĕ, анчах ĕçне ăнăçтарайман. Совет боецĕсем тăшманăн 45 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, пехота ларса пыракан 18 бронетранспортерне тата хăй тĕллĕн çÿрекен 28 туппине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хура тинĕсре тăшманăн 1.800 тонна таякан суднине тата 2 тральщикне шыва путарнă.

* * *

Крымри партизансен отрячĕ декабрĕн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пĕр чугун çул станцине пырса тапăннă. Совет патриочĕсем чугун çул линине сирпĕнтерсе янă, пăсса хунă, сыхăнăва татнă, бензин тултарнă 2 цистернăна тата çар хатĕрĕсем тиенĕ 11 вагона çунтарса янă.

* * *

Нимĕçсен 97-мĕш горно-егерски дивизийĕнчи 207-мĕш полкăн 3-мĕш батальонĕн тыткăна лекнĕ старши врачĕ Герман Шнейдер çапла каласа панă: «Юлашки çапăçусенче пирĕн полкра нумай офицер пĕтрĕ. 11-мĕш ротăн командирне—Лейхнер лейтенанта вĕлерсен, мана вăхăтлăха ун вырăнне лартрĕç. Икĕ кун иртсен, вырăссем пирĕн оборонăна татрĕç те пире çавăрса илчĕç. Салтаксен пĕр пайĕ тарса саланчĕ, ыттисем манпа пĕрле тыткăна парăнчĕç. Хĕвелтухăç фронтĕнче нимĕç çарĕн офицерĕсем питĕ нумай пĕтеççĕ. Обер-лейтенант Нестлер, Берлинкра нумай вăхăт хушши пурăннăскер, çапла каларĕ: хальхи вăхăтра нимĕç офицерĕсен тăватă пайĕнчен виçĕ пайĕ—резервистсем, вĕсене кĕске срокла курссенче çеç вĕрентнĕ, терĕ. Офицерсен шухăшкăмăлĕсем питĕ пусăрăнчăк. Хăшпĕр офицерсем уççăнах çапла калаççĕ ĕнтĕ: «Гитлерăн авантюризмĕ Германие вăрçăра аяла турĕ», теççĕ.

* * *

Аяларах нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Киев облаçĕнчи Барышевка ятлă ялта тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Пирĕн района оккупациленĕренпе гитлеровецсем пирĕн районри мирлĕ пурăнакан нумай çынна асаплантарса тата персе вĕлерчĕç. Барышевка ялне нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларсан, эпир ял хĕрринче пĕр шăтăка чавса, унтан нимĕç ирсĕрĕсем вĕлернĕ совет гражданĕсен 95 виллине туртса кăлартăмăр. Виллисем хушшинче çаксене палласа илтĕмĕр: колхоз председательне Григорий Ткаченкона, ялсовет председательне Ефросинья Василяка, Мария, Касьяненко колхозницăна, колхоз бригадирне Андрей Сердюка, МТС механикне Афанасий Василяка, медицина фельдшерне Федор Головатыя, колхоз фермин заведующине Семен Яхнона тата ыттисене те. Нимĕç ирсĕрĕсем асаплантарса тата персе вĕлернĕ совет гражданĕсен виллисене халь ял варринче тăванла вилĕ шăтăкне пытартăмăр».

АН ВĔÇЕРТĔР ЧĔРĔЛЛЕ!

Тухса хаяр вут-тăвăл витĕр,
Мĕнпур чăрмавсене сирсе
Тата илемлĕрех кун çиттĕр,
Тесе ĕçлеттĕмĕр хĕрсех.

Çав эпир кĕтнĕ кун çитсеччĕ,
Пурнăçлансаччĕç ĕмĕтсем.
Хавасăн, кăмăллăн çиçетчĕç
Телейпе сутăлнă питсем.

Хĕвеллĕ ырана куратчĕç
Сынсем — кашни хăй умĕнче.
Епле уявсем янăратчĕç
Пирĕн тулли урамсенче!

Харуш инкек килсе капланчĕ
Тăван çĕршывăмăр çине.
Усал тăшман — ирсĕр ăмсанчăк
Сĕклерĕ юнлă хĕççине.

Анчах хĕç çине хеç çĕкленчĕ,
Вăрçа тапранчĕç халăхсем.
Тăшман виллипе кĕперленчĕç
Вăл тапăнса килнĕ çулсем.

Тÿсми йывăр пулсан та йăтăм
Çак çĕр курман кĕрешÿре,—
Çук, иксĕлмерĕ пирĕн чăтăм,
Вăй хавшанмарĕ чĕрере.

Тĕксĕмленмерĕ çутă шанчăк,
Хура кармарĕ куçсене.
Хĕçсем хаярлăхпа туптанчĕç,
Асталăх кĕчĕ алсене.

Каппайчăк фриц антри-сухрийĕ
Шырать халь каялла çулне.
Халь хăпрĕ нимĕçĕн сехрийĕ,
Унне вĕçтернĕ сăсăлне.

Вăл хăйĕн вилĕмне мĕн курчĕ —
Урса кайсах хирĕç тăрать.
Пĕттĕр, путлантăр çав çĕр хурчĕ,
Ана ирер-ха хытăрах!

Хастарлăрах пулар, ачсемĕр,
Юн кÿпнĕ нимĕç-эсреле
Сывлăш памасăр, çĕмĕрсемĕр,
Ан вĕçертсемĕр чĕрĕлле!

Пирĕн телейлĕхе вăл татрĕ,
Пире таптасшăн пулчĕ вăл.
Вăл вут кăларчĕ, çил хускатрĕ,
Туянчĕ вилĕмле тăвăл.

Çав тăвăл çĕр пĕпне ăсатĕ
Чуниллисен тискер йăхне.
Вĕсенчен çĕршыва тасатĕ
Кÿрсе çынсен телейлĕхне.

УЙАП МИШШИ.

Фельетон вырăнне

Çĕнĕ çул кучченеçĕ

Хула коменданчĕ полковник фон Брехман çĕнĕ çул ячĕпе фюрер патне кучченеç яма шутланă.

—Савăнтăр-ха пĕрре, — тенĕ вăл хăйĕн шăрт пек хĕрлĕ уссийĕсене пĕтĕркелесе, — савăтарам-ха, унăн ĕçĕсем...

Шутланă та тунă. Тепĕр 5 минутран полковник кабинета хăйĕн адъюдантне чĕнтернĕ.

— Фюрер патне çĕнĕ çул ячĕпе кучченеç ярас. Мĕн яратпăр?

—Услам çу ярас,—ним шутласа тăмасăрах ответленĕ адъюдант. Халех халăхран пухма хушас...

— Услам çу юрăхлă мар, — тенĕ полковник, кăштах шутласан.—Ана ытти хуласенчен те яма пултараççĕ.

—Апла пулсан какай ярас.

— Какай, аван япала. Анчах та,—вăрăмăн сывласа илнĕ полковник.— Çук хальхи вăхăтра какай кăмăла каймасть. Çухатусем...

—Апла-тăк хурсем ярас, — тенĕ адъюдант.

— Хурсем, — чĕтресе илнĕ полковник. — Хурсем çинчен асăнни Рим, Итали çинчен аса илтерет. Италипе Рим... Хвах пĕлетĕн, кирлĕ мар...

—Тула ярса парас апла пулсан,—сĕннĕ адъюдант.

Полковник адъюдант çине пăхса илнĕ те шухăша кайнă.

Тулă,—тенĕ вăл кăштах шухăшласа.—Аван япала. Анчах ăçта ÿсет-ха вăл. Кубаньре, Украинăра. Ан та асăн тулă çинчен. Тек купаймăпăр ĕнтĕ ăна.

Адъюдант ним калама аптăраса чылайччен пĕр ури çинчен тепĕр ури çине тайăна-тайăна тăнă та савăнăçлăн кулса полковнике çакăн çинчен пĕлтернĕ:

—Эпир фюрер патне хамăран çĕнтерÿсем çинчен телеграмма ярăпăр. Партизансене пĕтерсе тăкни çинчен пĕлтерĕпĕр. Вот ку—чи лайăх кучченеç!

—Тĕрĕс тенĕ полковник. — Çыр: Берлин, Гитлера. Хула коменданчĕ полковник фон Брехман партизансене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкни çинчен пĕлтерет. Çĕнĕ çул ячĕпе сире...

Çак самантра полковник умне тăватă вăйпитти çын тухса тăнă. Вĕсем ним сăмахсăрах полковникпе, унăн адъюдантне çыхса пăрахнă та хапха умĕнчи çуна çине илсе тухса хунă.

—Яра пар, — кăшкăрнă пĕри,—партизансенчен çĕнĕ çул кучченеççĕсем пулчăр!

Партизансен лаши хăвăрттăн вăрман еннелле юртма тытăннă.

Д. ЕРБУЛАТКИН.
Действующи Çар.

Тăван çĕршывпа фронтшăн

1943 çул çитĕнÿсемпе çĕнтерÿсен çулĕ пулчĕ. Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем пархатарлă ĕçлерĕç. Агротехникăна пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырса, эпир кăçал кашни гектартан вăтамран 13-шер центнер тĕштырă, 80-шар центнер çĕрулми туса илтĕмĕр.

Тăрăшса ĕçлени сая каймарĕ. Колхозниксене кашни ĕçкунĕ çине 3-шер килограмм тĕштырă, 200-шер грамм купăста, кантăр тата ыттисене те валеçсе паретпĕр. Ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ Иван Яковлев, Афанасий Николаев, Евдокия Харитонова юлташсен çемйисем тĕштырă кăна 220-шер пăт илчĕç. Ытти нумай колхозниксем 100—150-шар пăт е ытларах та илчĕç. Пирĕн колхозниксен колхозниксен нумайăшĕ государствăна 50—60-шар пăт тырă сутрĕç.

1942 çулта ялхуçалăх ĕçне аванлатнăшăн пирĕн колхоз ВКП(б) райкомĕпе райсовет куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕччĕ. Çав ялава эпир кăçал та хамăр алăра тытса тăратпăр. Çакă пирĕн колхозниксене савăнтарать, татах та тăрăшсах ĕçлеме хавхалантарать.

Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç—пысăк та ответлă ĕç. Çакна пирĕн колхозниксем аван ăнланаççĕ, кашни вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Кăçал вылăхсен шучĕ чылай ÿсрĕ. План тăрăх 70 сысна, 58 ĕне, 110 сурăх пулмалла пулнă, пирĕн халь сыснасем 75 пуç, ĕне-вылăхсем 85, сурăхсем 134 пуç пур. Кунсăр пуçне эпир нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшма 2 пăру, 6 сурăх патăмăр, çак кунсенче татах ятарлатпăр.

Эпир кăçал кашни сăвакан ĕнерен 1.400 литр сĕт суса илтĕмĕр, кашни сысна аминчен 10 çура, кашни ĕнерен пăру илсе, вĕсене вăйлăн пăхса çитĕнтеретпĕр.

Сурăх фермăинче Елена Чернова ĕçлет. Вăл 100 сурăхран 120 путек пăхса çитĕнтерчĕ. Кашни сурăхран вăтам шутпа 4-шар килограмм çăм касса илнĕ. Çакăншăн Чернова юлташа ĕçшĕн укçа 5,8 килограмм çăм, 2 тир тÿлерĕмĕр. Ене савакан А. Никитина юлташа 327 литр сĕт, 16 килограмм какай, çавăн пекех Е. Харитонова юлташа та 135 литр сĕт, 16 килограмм какай хушса тÿлерĕмĕр.

Сталин юлташ фронта вăйлăн пулăшса тăма чĕннине асра тытса, пирĕн колхозниксем фронта пулăшас тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлерĕç. Государство умĕнчи парăмсене пурне те срокчен тÿлесе татнисĕр пуçне, эпир 1944 çулшăн аванс шутне 275 центнер тырă, 3 центнер çĕс çара хунă. Хĕрлĕ Çар валли 48 центнер çăнăх, 34 килограмм çу, типĕтнĕ какай тултарнă 15 посылка, махорка, типĕтнĕ пахча-çимĕç, 400 çăмарта ярса патăмăр.

Пирĕн колхозниксем Военнăй Заема 54.000 тенкĕлĕх, укçапа виçĕмĕш лотерейăпе 21.000 тенкĕлĕх çырăнса илчĕç те укçине пĕр кун хушшинчех тÿлерĕç.

Хаваслă эпир çитес çуракине тимлĕн хатĕрленетпĕр. Вăрлăхсене çитĕнлĕхе уйăрса хунă, тĕштырăсене тăварса хывнă, плугсене тата ытти ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсаса пĕтерсе лартнă. Урапасене лаша тăварăшĕсене те юсаса лартнă. Уя 2.000 лав ытла тислĕк кăларнă. 35 центнер фекали, 10 центнер кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕсене те нумай пухнă. Колхозниксем халĕ агротехникăна вĕренеççĕ.

Çитес çул эпир хамăр умма кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илес задача лартрăмăр. Ку задачăна эпир пурнăçлатпăрах. Çакă вăл Тăван çĕршывпа фронт умĕнчи тивĕçлĕхе чыслăн пурнăçлани пулĕ.

Т. ИВАНОВА:
Комсомольски районри «Трактор» колхозăн председателĕ.

Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне республикăрах хăварассишĕн

Ыран — Çĕнĕ, 1944 çул пуçланать. Халь ĕнтĕ иртнĕ çулăн итогĕсене тума пулать.

Иртнĕ çул вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри ÿсĕмсемшĕн пирĕн республика Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илчĕ. Ăна хамăр республикăрах хăварассишĕн кĕрешсе, эпир кăçал хамăрăн фермăсенче ĕнесем планпа пăхнинчен 12 пуç, сыснасем 48 пуç, сурăхсемпе качакасем 48 пуç, 105 чăх ытларах ĕрчетрĕмĕр.

Вылăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес ĕçре те пирĕн пуян опыт пур. План тăрăх 24 ĕнерен 27.800 литр сĕт суса илме пăхнăччĕ, эпир вара 32.200 литр суса илтĕмĕр. Сĕт илмелли задание пур дояркăсем те ирттерсе тултарчĕç. Наталья Васильева пăхакан «Манька» ятлă ĕне 1.700 литр сĕт пачĕ.

Пăру пăхакансем те лайăх ĕçлерĕç. Пĕр пăру та вилмен. Пăрусене лайăх пăхнă, вĕсем кашни кун вăтамран 650-шар грамм хутшăнса пычĕç. Орденоноска Ксения Григорьева пăхакан пăрусем талăкра лĕр килограмм йывăрĕш ÿсии те пулнă. К. Григорьева юлташ виçĕ çул хушшинче фермăна 128 пăру çитĕнтерсе пачĕ.

Сысна пăхакан Вера Никифорова юлташăн ĕçне те мухтамалла. Вăл кашни сысна аминчен 17 çура илчĕ. Сурăх пăхакан Анастасия Смирнова путексем илмелли задание ăнăçлăн тултарчĕ.

Пирĕн кашни работница ĕçшĕн хушса тÿленине илчĕ. Доярка Н. Васильева юлташ 315 литр сĕт, орденоноска К. Григорьева—65 килограмм какай, В. Никифорова—9 çура илчĕç. Мана хама фермăсене аван ертсе пынăшăн 102 литр сĕт тата 108 килограмм какай тивет.

1943 çулăн итогĕсем начар мар пулчĕç. Пирĕн республикăна тĕштырă туса илес енĕпе те, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратнă. Çакă вăл пире ĕçре хавхалантарса пырать. 1944 çулта эпир фронтпа çĕршыва ытларах пулăшасса ĕмĕтленетпĕр.

С. СОЛОВЬЕВ,
Сĕнтĕр районĕ, «Красное Сормово» колхозри фермăсен заведующийĕ.

Ют çĕршывсенче

Эйзенхауэр калани

ЛОНДОН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Çурçĕр-Африкăри союзниксен çарĕсен штабĕ çумĕнчи специальнăй корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Европа территорине пырса кĕмелли çарĕсен çĕнĕ главнокомандующийĕ Дуайт Эйзенхауэр пресс-конференцире çапла каланă: «Европăри вăрçăра эпир 1944 çулта çĕнтеретпĕр». «Европăри вăрçăра çĕнтермешкĕн пире пĕр çакă çеç кирлĕ,—тенĕ Эйзенхауэр: — пирĕн икĕ çĕршывра та мĕнпур арçынсемпе хĕрарăмсем, фронтран пуçласа тăсти аякри ялсем патне çитиччен, хăйсен тивĕçне пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсе пымалла».

«Эпир Рим патнелле ытла та майĕпен наступлени туса пыратпăр,— тенĕ малалла Эйзенхауэр. — Эпир вăйлăн хирĕç тăракан тăшмана хĕссе пыратпăр, Эпир çурçĕрелле наступлени туса пынин хăвăртлăхĕ нихçанхинчен те ытларах Германи командованийĕ пире хирĕç çĕнĕ вăй мĕн чухлĕ яма шутланинчен килĕ».

Эйзенхауэр хăйне çĕкĕ вырăна лартни çинчен Рузвельт Америкăна таврăннă чухне ун патне кĕрсе тухсан пĕлнĕ. Рузвельт ăна çапла каланă: «Эсир хăвăр япаларсене пухса, Европа территорине пырса кĕмелли çарсен командующийĕ пулма кайсан лайăхрах пулĕччĕ», тенĕ.

Рейтер агентстви çак заявлени çумне хушса каланă тăрăх, Эйзенхауэр тата çапла каланă: Вăтаçĕр тинĕсри вăйсен командованине туни питĕ ăслă ĕç пулса тăрать, вăл союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ маларах тунă çитĕнÿсем пекех пысăк çитĕнÿсем тума май парать. Ĕçлеме юрăхлă çынсене суйласа лартнă ĕнтĕ,—тенĕ Эйзенхауэр. — Александер генерал Италишĕн малалла çапăçать.

Италири фронт йăлтах лăпланса ларма пултарать тенĕ хыпара хирĕç Эйзенхауэр: апла пулма пултараймасть, тенĕ. Италире наступлени туса пыма пăрахсассăн, Хĕвеланăç Европăна пырса кĕмелли анлăрах плансем шутланса ларнă пулĕччĕç,— тенĕ.

Эйзенхауэр пресс-конференцире тата çапла каланă: «Манăн ĕç çакă пулса тăрать: манăн, кунти пекех, ертсе пыракан коллектива лайăх пĕтĕçтермелле, унта нимĕнле хирĕçÿ те ан пултăр, унта пурте пĕрпĕрне шанса, пĕр-пĕринпе килĕштерсе тата мĕнпур вăйпа ĕçлетчĕр. Эпир кунта çавăн пек юлташлăн ĕçлес йĕрке туса хутăмăр тесе шутлатăп эпĕ.—Çав юлташлăх союзниксем хушшинче пулнă хирĕçÿсене пĕтерес вăхăта çывхартрĕ».

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: 15-мĕш арми группин фронтĕнче иртнĕ кун пысăк ĕçсем пулман. Англин 8-мĕш армине кĕрекен Канада çарĕсем Ортонăна тăшмантан тасатнă тата тăшманăн хирĕç тăмалли узелĕсене пĕтерсе пынă. Кăнтăралларахра французсен Марокко çарĕсем пĕр паха çÿллĕ вырăна атакăланă, тăшман çав вырăншăн вăйлăн çапăçнă. Америка çарĕсем тата икĕ çÿллĕ вырăна тытса илнĕ, çапла вара вĕсем хăйсен паха тусем çинчи позицийĕсене çирĕплетнĕ.

Авиаци ĕнер тăшманăн Италири темиçе çар объектне тата Югослави çыранĕ патĕнчи суту-илÿ суднисене атакăланă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ИТАЛИ... ЫЛТТАН ЗАПАСНЕ КОНФИСКАЦИЛЕНĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, гитлеровецсем Италин ылттăн запасне конфискацилесе Германие ăсатнă.

Италин нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчи фашистла влаççем Германие оккупаци расхочĕсемшĕн кунне 230 миллион лира тÿлеççĕ.

БИСКАЙ ЗАЛИВĔНЧИ ÇАПĂÇУ

ЛОНДОН, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Англин тинĕс-çар министерствипе авиаци министерстви пĕрле çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă: Британин тинĕс-çар флочĕн карапĕсем, çыранри самолетсемпе çыхăнса кĕрешсе, Бискай заливĕнче Германин 3 эсминецне путарнă, темиçе эсминецне сиенленĕ.

АНГЛИ БОМАРДИРОВЩИКĔСЕМ БЕРЛИНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Берлина çав тери хаяррăн тапăннă. Берлин çине фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем 2000 тонна ытла пăрахнă. Летчиксем каланă тăрăх, пушарсен тĕтĕмĕ çÿле 5000 метра яхăн хăпарнă.

Пирĕн землякcем

Гварди капитанĕ Кириллов

Анатолий Кириллов Шăхасан районĕнчи Тури Сурăм ялĕнче çуралса ÿснĕ. Ача чухнех хăйĕн паттăрлăхĕпе çынсене тĕлĕнтернĕ, мĕн ачаранах çар çынни пулма ĕмĕтленнĕ. Çар вăйăисене выляснăн кăçсах кайнă вăл, ун пек чух вара яланах çиеле тухассишĕн чун-чĕререн хĕмленсе çуннă. Вăл ал вĕççĕн кĕрешме ăста пулнă, ăна ялта хăй ÿсĕмĕнчи çамрăксем никам та çĕнтереймен.

Хĕрлĕ Çар ретне илсен, Кириллов Киеври çар училищинче вĕренме кăмăл тăвать, вăл унтан «Отлично» паллăсемпе вĕренсе тухать.

...1941-мĕш çулхи август уйăхĕнчен пуçласа вăл отечественнăй вăрçă фрончĕсенче нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçать. Темиçе хутчен хаяр та вут-хĕмлĕ çапăçу вучахĕсенче пулнă вăл, яланах çĕнтернĕ. Икĕ çул хушши вăрçăра пулса, гитлерла вăрă-хурахсене 800 çын ытла пĕтерсе тăкнă.

Кириллов — разведчиксен ротин командирĕ.

— Разведка ĕçĕ — çапăçура калама çук пысăк та хисеплĕ ĕç. Юрататăп эпĕ вăл ĕçе, мĕншĕн тесен, разведка тумасăр тăшмана çĕнтерме çуккине эпĕ лайăх вĕренсе çитрĕм, — тет вăл.

Пĕчĕк ушкăнсемпе тăшман тылĕсене кĕрсе кайса, Кириллов 16

«чĕлхе» çаклатса килнĕ, вăл шутра, нимĕçсен салтакĕсемсĕр пуçне, унтер-офицерĕсемпе офицерĕсем те пур.

Кирилловсен чаçĕ — Гварди ялавне илнĕ. Капитан Кириллов совет гвардеецĕн мухтавлă ятне чыслăн тытса пырать. Унăн çапăçури паттăрла ĕçĕсене каласа та пĕтерес çук. Вăл темиçе хутчен те тăшман гарнизонĕсене кайса çĕмĕрнĕ. Пĕррехинче тата, çав тери хаяр çапăçу пынă вăхăтра, вĕсене тăшмансем çавăрса илнĕ. Кириллов хăйĕн подразделенине тăшман ункинчен илсе тухнă.

Капитан Кирилловăн тăшмансемпе куçа-куçăн тăрса çапăçнă самантсем те тем чухлех пулнă. Çапла пĕрре, разведкăна кайсан, вăл пĕр нимĕç офицерĕпе ал вĕççĕн тытăçса çапăçать. Нимĕç офицерĕ те питĕ тĕреклĕскер, кăкласкер пулнă. Анчах та Кириллов хăраса ÿкмен. Хăй ача чухнех кĕрешме вĕреннĕ ăсталăхĕпе усă курса, вăл çав нимĕçе хăй айне пĕтĕрсе чикет те çĕçĕпе чиксе пăрахать. Çавăн чухне вăл 3 нимĕç салтакне, çар хатĕрĕсемпе пĕрлех, тыткăна илсе таврăнать.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче паттăрлăхпа хăюллăх кăтартнăшăн Кириллова Хĕрлĕ Ялав орденĕпе тата «За отвагу» медальпе наградăлаççĕ. Еçе ăста та тĕплĕн туса пынине кура, ăна капитан таваççĕ.

Капитан Кириллов пилĕк хутчен аманнă, анчах халĕ те вăл фронтра, гитлерла йытă кĕтĕвĕсене хаяррăн çĕмĕрсе пырать. Хĕрлĕ Çар хĕвеланăçнелле çĕнтерÿллĕн куçса пынă вăхăтра, капитан Кириллов хăйĕн подразделенийĕпе пĕрле тĕлĕнмелле паттăрлăхпа ăсталăх кăтартать. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна çак юлашки вăхăтри çапăçусемшĕн тепĕр хут награда пама тăратнă.

— Эпĕ Тăван çĕршывшăн, тăван халăхшăн çапăçатăп. Хаяр та вутлă çапăçусене кĕнĕ чухне ман умма яланах тăван çĕршыв тата тăшмансен тискер ĕçĕсем тухса тăраççĕ. Çавăнпа эпĕ çапăçăва пĕр хăрамасăр кĕрсе каятăп, тăшмансене нимĕн хĕрхенмесĕр çĕмĕрес килет манăн. Эпир яланах çĕнтернĕ, эпĕ те çĕнтернĕ. Кĕçех тăшмансене хамăр çĕр çинчен пуçĕпех шăлса ывăтăпăр, вăл вăхăт инçе юлмарĕ, —тесе çырать Кириллов хăйĕн тăван ялĕнчи колхозниксем патне.

Тĕрĕс. Тăшмансене эпир хамăр çĕр çинчен шăлса ывăтăпăр. Вăрçă чарăнĕ. Илемлĕ те лăпкă, телейлĕ пурнăç пуçланĕ. Эпир паттăр ывăлсене яланах асра тытăпăр.

Ĕмĕр-ĕмĕр мухтав паттăрсене!

Степан АСЛАН.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1181. Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.10...